27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ИЮЛЬ
30
ВЫРСАРНИКУН
149(6644) №

# Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

## МАССĂЛЛĂ-ПОЛИТИКĂЛЛĂ ĔÇĔН ХАЛЬХИ ЗАДАЧИСЕМ

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленире: «Колхозсемпе МТС-сен тата совхозсен мĕнпур вăйĕсемпе майĕсене тырпула кĕске сроксенче тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртнĕ çĕре, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлемелли плансене вăхăтра тултарнă çĕре мобилизацилемелле, çапла вара вăрçăн татăклă тапхăрĕнче Хĕрлĕ Çарпа çĕршыва çителĕклĕ таран апат-çимĕç, промышленноçа — чĕртавар туса памалла», тесе кăтартса пачĕç.

Çак ответлă та хисеплĕ задачăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртес тесен, колхозсенчи агитаципе пропаганда ĕçне пĕтĕмпех умра тăракан задачăсене пăхăнтармалла. Парти райкомĕсем тырпула пухса кĕртнĕ тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрленĕ тапхăрта массăллă-политикăллă ĕçе организацилеме плансем туса çирĕплетме тивĕçлĕ. Вăл планра ялти ĕççыннисене уйхирсенче хастарлăн ĕçлеме, хăвăрт наступлени туса пыракан Хĕрлĕ Çара пур майсемпе те пулăшса тăма мобилизацилемелли мероприятисене палăртса хумалла.

Колхозниксемпе колхозницăсене, МТС-семпе совхозсен работникĕсене СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление тĕплĕн ăнлантарса памалла тăвас пулать. Вăл постановление партипе совет, комсомол активĕн районсенчи канашлăвĕсенче, партипе комсомол пухăвĕсенче, колхозниксен тата МТС-семпе совхоз работникĕсен пухăвĕсенче сӳтсе-явмалла.

Пуçламĕш парторганизаци секретарĕсене, агитколлектив руководителĕсене ертсе пырас тата пулăшас ĕçе вăйлатмалла. Вĕсемпе тырпул пухса кĕртнĕ, кĕраки тунă тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрленĕ вăхăтра политикăллă-массăллă ĕçе организацилесси çинчен, Отечественнăй вăрçăн хальхи тапхăрĕпе умра тăракан задачăсем çинчен сӳтсе-явса семинарсем туса ирттермелле. Çав ыйтусемпех агитаторсен, вулав çурчĕсен заведующийĕсен, колхозсемпе бригадăсенчи стена хаçат редакторĕсен канашлăвĕсене ирттермелле. Вĕсенче ялти агитаторăн, çутĕç учрежденийĕсен, стена хаçачĕсемпе боевой листоксен тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтри задачисем çинчен докладсем туса памалла. Районсенчи ертсе пыракан работниксем колхозниксене уйăхра пĕр хутчен политикăллă доклад туса пама тивĕçлĕ. Парти райкомĕсен докладчиксемпе лекторсен семинарĕсене тăтăшах ирттермелле.

Районри хаçатсен хăйсен страницисенче «Хисеп хăми» тумалла. Унта тырпул пуçтарса кĕртес, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес, кĕрхи тырăсене акас ĕçре малта пыракансене кĕртмелле.

Колхозсем, МТС-сем, бригадăсем, звеносем, колхозниксем, трактористсем, комбайнерсем социализмлă ăмăртăва анлăн сарса памалла. Колхозсене, бригадăсенче ăмăрту хăмисем, хисеп хăмисем, ăмăртура мала тухакансене пама Хĕрлĕ ялавсем тумалла. Ăмăрту итогĕсене кулленех туса пырса, вĕсем çинчен пурне те пĕлтермелле. Боевой листоксене, стена хаçачĕсене вăхăтра кăлармалла, политинформацисем тăтăшах ирттермелле, хаçат витринисем организацилемелле. Иртнĕ çулта республикăри хăшпĕр районсенче художествăллă пултарулăх кружокĕсен членĕсенчен агитбригадăсем тунăччĕ. Ун пек бригадăсене кăçал та организацилес пулать.

Вулав çурчĕсене пурне те лайăх ĕçлекен тăвас пулать, вĕсенче культурăллă йĕрке пулмалла. Кашни вулав çуртĕнче справкăсем паракан сĕтел, хаçатсен витрини пултăр, стена хаçачĕ, боевой листок йĕркеллĕ тухса тăтăр. Тырпул пуçтарса кĕртнĕ вăхăтра вулав çурчĕсен ĕçне уйхире кăлармалла. Кашни районрах куçса çӳрекен библиотекăсем 15—20-рен кая мар пулмалла. Ялти ĕççыннисене кино кăтартас ĕçе татăклăнах лайăхлатмалла. Наглядлăй агитаци ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе уйрăмăнах тимлĕн тăрăшмалла.

Тырпул пуçтарса кĕртнĕ вăхăтра хаçат-журналсене вырăнсене вăхăтра çитерни паллă вырăн йышăнса тăрать. Парти райкомĕсен пропагандăпа агитаци отделĕсен çав ĕç мĕнле пынине куллен тĕрĕслемелле.

Тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте малта пыракансен опытне районсенчи тата республикăри хаçатсем тата радио урлă анлăн сармалла, çавăнпа пĕрлех кахалсене пĕтĕм халăх умĕнче питлемелле.

Агитаторсен вăйĕпе уйхир тата трактор бригадисенче докладсемпе калаçусем ирттермелле. Докладсемпе калаçусенче çак ыйтусене ăнлантарса парасси тĕп вырăнта пулмалла: Хĕрлĕ Çар Хĕвеланăçнелле ăнăçлăн наступлени туса пыни тата пирĕн задачăсем; Отечественнăй вăрçăн виçĕ çул талăк хушшинчи итогĕсем; сисĕмлĕхе ӳстересси, тырпула сыхлассине вăйлатасси — мĕнпур колхозниксен хисеплĕ задачи; тырпула пухса кĕртнĕ çĕрте колхозниксене ĕç тăрăх тӳлесси; социализмлă ăмăрту тырпула пухса кĕртес ĕçре; тырпула пухса кĕртнĕ чухне тăкаксенчен мĕнле сыхланмалла; чăваш халăхĕ фронта пулăшни тата пирĕн задачăсем; пирĕн землячсем — Совет Союзĕн Геройĕсем; Ленин—Сталин партийĕ фашистла нимĕç вăрă-хурахĕсене çĕнтерессишĕн пыракан кĕрешӳĕн организаторĕ; Сталин юлташ пире тăшмана тĕпĕ-йĕрĕпех çĕмĕрсе тăкма ертсе пырать; фашистла нимĕç захватчикĕне—вилĕм; Тăван Хĕрлĕ Çара пулăшассине вăйлатар.

Агитаторсен уйхирте, колхозниксемпе пĕрле ĕçлемелле, политикăллă агитаци ĕçне пушă вăхăтра ирттермелле.

Политикăллă-массăллă ĕçе большевикла организацилени тырпула вăхăтра тата тăкаксăр пухса кĕртессишĕн, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес плана срокчен пурнăçлассишĕн кĕрешме колхозниксене, МТС-семпе совхозсен работникĕсене мобилизацилени, çапла вара тăшмана çĕнтерес вăхăта çывхартма пулăшать.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

## Сталин юлташа

Пирĕн халăх аттемĕр тата учителĕмĕр Иосиф Виссарионович!

Эпир, Чăваш республикинчи Муркаш районĕнчи «Красное Сормово» колхоз председателĕ Петр Николаевич Майков тата ферма заведующийĕ Сергей Матвеевич Соловьев, хамăр перекетлесе пухнă 100.000 тенкĕ боевой самолет тума хывăпăр.

Эпир Сиртен, юратнă учителĕмĕр Сталин юлташ, пирĕн укçапа тунă боевой самолета Совет Союзĕн Геройне пирĕн ентешĕмĕр Федот Никитич Орлов капитана пама ыйтатпăр. Пирĕн парне Эпир ертсе пынипе этемлĕхе фашистсен варварсенчен хăтарас ĕçре кĕрешекен Хĕрлĕ Çара пулăшни пултăр.

Иртнĕ çулта эпир государствăна 190 пин тенкĕ сутрăмăр. Государствăн Виççĕмĕш Военнăй заемне 17.000 тенкĕлĕх çырăнтăмăр, укçине çийĕнчех тӳлерĕмĕр.

Сире, хаклă Иосиф Виссарионович, Эпир хамăрăн мĕнпур вăй-хала тăшмана тĕп тумалли ĕçе паратпăр. Сире çирĕп сывлăх сунатпăр.

«Красное Сормово» колхоз председателĕ П. Н. МАЙКОВ.
Ферма заведующийĕ С. М. СОЛОВЬЕВ.

### Чăваш АССР-ĕ, Муркаш „Красное Сормово“ колхоз председателĕ МАЙКОВ юлташа Фермăсен заведующийĕ СОЛОВЬЕВ юлташа

Эсир, Майков тата Соловьев юлташсем, Хĕрлĕ Çарăн сывлăш вăйĕсемшĕн тăрăшнăшăн манран салам тата Хĕрлĕ Çар тав тунине йышăнăр. Эсир ыйтни пурнăçа кĕрĕ.

И. СТАЛИН.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

## Сталин юлташа

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Эпир, Чăваш республикинчи Муркаш районĕнчи «Красное Сормово» колхозри хир бригадирĕ Ефим Андреевич Смелов тата колхоз счетоводĕ Василий Николаевич Волков, хамăр перекетлесе пухнă укçапа самолет тума хывса, ăна Совет Союзĕн Геройне пирĕн ентешĕмĕр ... ка подполковник Борис Михайлович Васильева памашкăн ирĕк ыйтса тăратпăр. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче эпир государствăна 100 пут тырă сутрăмăр. Государствăн Виççĕмĕш Военнăй заемне 10.000 тенкĕлĕх çырăнса илсе, укçине çийĕнчех тӳлерĕмĕр. Фашистсене çĕнтерсе пĕтеричченех хамăрăн мĕнпур вăя-хала памашкăн шантаратпăр.

Сире, юратнă Иосиф Виссарионович, çирĕп сывлăх сунатпăр.

Уйхир бригадирĕ Е. А. СМЕЛОВ.
Колхоз счетоводĕ В. Н. ВОЛКОВ.

### Чăваш АССР-ĕ, Муркаш „Красное Сормово“ колхоз бригадирне Е. А. СМЕЛОВ юлташа Колхоз счетоводне В. Н. ВОЛКОВ юлташа

Эсир, Ефим Андреевич тата Василий Николаевич, Хĕрлĕ Çарăн сывлăш вăйĕсемшĕн тăрăшнăшăн манран салам тата Хĕрлĕ Çар тав тунине йышăнăр. Эсир ыйтни пурнăçа кĕрĕ.

И. СТАЛИН.

## СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

### Совет Союзĕн Маршалне Иосиф Виссарионович СТАЛИНА „Çĕнтерӳ“ орденпа наградăласси çинчен

Хĕрлĕ Çарăн наступленилле операцийĕсене, Германи çарĕ питех те пысăк поражени тӳсесси патне тата фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче лару-тăру татăклăнах Хĕрлĕ Çара усăллăн улшăнасси патне илсе çитернĕ операцисене организацилесе ирттерес тĕлĕшри калама çук паха тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн Совет Союзĕн Маршалне Иосиф Виссарионович СТАЛИНА

„Çĕнтерӳ“ орденпа

наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1944 çулхи июлĕн 29-мĕшĕ.

## СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

### Совет Союзĕн Геройне Совет Союзĕн Маршалне Георгий Константинович ЖУКОВА иккĕмĕш „Ылттăн Çăлтăр“ медалĕпе наградăласси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳре фронтсен операцийĕсене ертсе пырас тĕлĕшпе Верховнăй Главнокомандовани панă боевой заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çав операцисене пула тунă çитĕнӳсемшĕн Совет Союзĕн Геройне Совет Союзĕн Маршалне Георгий Константинович ЖУКОВА иккĕмĕш «ЫЛТТĂН ÇĂЛТĂР» медалĕпе наградăлас, бронзăран бюст туса унăн тăван çĕршывĕнче постамент çине лартас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи июлĕн 29-мĕшĕ.

## Совет Информаци Бюровĕнчен

### ИЮЛĔН 28-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 28-мĕшĕнче пирĕн çарсем ДАУГАВПИЛС (Двинск) хулинчен çурçĕртерехре, наступление вăйлатса пырса, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 350 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра—ТИЛЖА, КРИСТИНКИ, ДЗИЛЯРИ, ДРИЦЕНИ, ВИЛАНЫ, ВИДСМУЙЖА, РИБЕНЫ, ПРЕЙЛИ, ДУБЕНЦЫ ятлă пысăк ялсем тата САКСТАГАЛА, ЗАДЗУКАЛНС, СТРУЖАНИ, ТАЙГАЛА, ДРИЦЕНИ, КУГРАС, БУРЗАВА, ВИЛАНЫ, ПУПОЛИ, САЛМЕНЕ, ПРЕЗМА, КРАЙ, СЕРГУНТА ятлă чугун çул станцийĕсем.

ДАУГАВПИЛС (Двинск) хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 60 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра—НИДЕРКУНИ, ГРИВА, ЮДОВКА, ЯНОВКА, ТАРЖЕКИ, ТУРМОНТ, КЩАВА ятлă пысăк ялсем тата ГРИВА, КУРЦУМС, ЗЕМГАЛЕ, ТУРМАНТАС ятлă чугун çул станцийĕсем.

ШАУЛЯЙ хулинчен çурçĕртерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, малалла куçса пынă, халăх пурăнакан 150 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра — ИОНИШКИС хули, ВЕКШНЯНЫ, ГИТАРЫ, АУШТЕНКИ, ПОКОПИ, СИДОРЫ, ЦИТОВЯНЫ, ШАВКОТЫ, ГРИНКИШКИ ятлă пысăк ялсем тата ИОНИШКИС, ТАЛИОЦИ, ЯНОВИЦИШКИ, ДВОРНИКИ, СИДОРЫ ятлă чугун çул станцийĕсем.

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, аякран çавăрса илмелли ăста маневр туса тата фронтран атакăласа, июлĕн 28-мĕшĕнче Белоруссин область центрне БРЕСТ (Брест-Литовск) хулипе крепоçне—вăрçă тĕлĕшпе питех те паха пулса тăракан чугун çул узелне тата нимĕçсен Варшава енчи оборонин тĕреклетнĕ хăватлă районне туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 60 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — БРЕСТ облаçĕнчи район центрĕ ВЫСОКОЕ хули, ТЕРЕСПОЛЬ хули, КЛЮКОВИЧИ, БОРДЗЕВКА, БУЛЬКА, ЗАЖЕЧЕ, СТАВЫ, ШУМАКИ, ПУГАЧЕВО, ГЕРШОНЫ, МОКРАНЫ, РОКИТНО ятлă пысăк ялсем тата ВЫСОКО-ЛИТОВСК, ТЕРЕСПОЛЬ чугун çул станцийĕсем.

Пирĕн çарсем БРЕСТ хулинчен хĕвеланăçнерехре, тăшманăн виçĕ дивизирен тăракан ушкăнне çавăрса илсе, ЗАПАДНЫЙ БУГ шывĕ çумне хĕстерсе лартнă та, халĕ çав ушкăна пĕтерсе тăкассишĕн çапăççĕ.

ЛЮБЛИН хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, ăнăçлă наступление вăйлатса пырса, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 300 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра — СТОЧЕК, ЛЯТОВИЧ, ЦЕГЛУВ, СЕННИЦА, КОЛБЕЛЬ, КАЗИМЕЖ, КАМЕНЬ ятлă пысăк ялсем тата ПИЯВА, ЖИЧИН, ВОНВОЛЬНИЦА, НЕДЖВИЦА ятлă чугун çул станцийĕсем.

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, САН шывĕ урлă каçса, тăшманăн оборонине татнă та, танксем тата утлă çарпа пехота аякран кайса çавăрса илмелли маневр тунипе пула, ПЕРЕМЫШЛЬ хулипе крепоçне тата ЯРОСЛАВ хулине — пысăк чугун çул узелĕсене, нимĕçсен оборонин тĕреклетнĕ паха пункчĕсене туртса илнĕ.

Пирĕн çарсем тăшманăн ЛЬВОВ хули районĕнче çавăрса илнĕ чаçĕсене пĕтерсе тăкнă чухне çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: танксем — 35, тĕрлĕ калибрлă тупăсем—250, минометсем — 420, пулеметсем—500 ытла, бронетранспортерсем — 60, чугун çул эшелонĕсем — 20, лашасем — 1000 ытла, çавăн пекех тата боеприпас, хĕçпăшал тата çар пурлăх склачĕсем нумай тытса илнĕ. 3.500 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен 8.000 вилли ытла выртса юлнă.

СТАНИСЛАВ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем Станислав облаçĕнчи район центрĕсене—ПЕРЕГИНСКО хулине тата СОЛОТВИН хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра—ДОБРОВЛЯНЫ, НОВИЦА, РУВНЯ, КРАСНА, ПОРОГИ, КРИЧКА, МАНЯВА ятлă пысăк ялсем тата ПЕРЕГИНСКО чугун çул станцийĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Июлĕн 27-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 57 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 53 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Июлĕн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци Инстербург (Хĕвелтухăç Прусси), Варшава тата Крустпилс чугун çул узелĕсене тапăннă. Нимĕçсен çар эшелонĕсемпе çар склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Инстербург чугун çул узелĕнче бомбăсем тӳрех пырса тивнипе икĕ чугун çул составĕ сирпĕнсе кайнă. Бомбăсем пăрахнине пула 30 пушара çити тухнă. Çав пушарсем сарăлса кайса чугун çул узелĕн пĕтĕм территорине сарăлнă. Горючи склачĕсене вут хыпса илнĕ. Темиçе взрыв пулнă, вĕсенчен чи вăйлăраххи чугун çул узелĕн вăтам пайĕнче пулнă.

Бомбăсем пăрахнине пула Варшава çумĕнчи Прага хулинчи чугун çулсем çинче пушарсем нумай тухнă. Вагонсемпе платформăсем, çавăн пекех тата горючи эшелонĕсем çуннă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

Крустпилс чугун çул узелĕнче бомбăсем пăрахнине пула нимĕçсен пĕр çĕре капланса тулнă çар эшелонĕсем хушшинче темиçе пушар тухнă.

### Суворов вăхăтĕнчен юлнă паха япаласем

Хĕрлĕ Çарăн артиллерипе истори музейĕ Ленинградран Суворов именине Кончанское ялĕнчи музей валли хаклă экспонатсем янă. Вĕсем хушшинче: Суворов салтакĕсемпе офицерĕсен хĕçпăшалĕсем — кременьпе вут тивертсе перекен пăшалсем, пистолетсем, мушкетсем, хĕçсем тата гренадерсен çурма хĕçĕсем пур. XVIII-мĕш ĕмĕрте тунă кĕмĕл кинжал уйрăмах паха пулса тăрать. Ана музейăн наукăнăй сотрудникĕ Измаила ирĕке кăларнă хыççăн крепость ишĕлчĕкĕсене чавса пăхнă чухне тупнă. (ТАСС).

## Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕнче

### 1944 çулта Чăваш республикинчи колхозсемпе совхозсенче кĕрхи тырăсем акса хăварасси çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ çакна палăртнă: 1945 çулта кĕрхи тырăсене тухăçлăн туса илесси çĕртме пуссисене вăхăтра тата лайăх ĕçлесе çемçетнинчен, вырăнти удобренисемпе туллин усă курнинчен, кĕрхи акана тĕплĕн хатĕрленсе çитсе, ăна агротехникăн лайăх срокĕсенче туса ирттернинчен килет. Чылай çулсем хушшинчи практика çакна кăтартса пачĕ: тивĕçлĕ сроксенче акса хăварнă кĕрхи тырпулсем яланах тухăçлă пулаççĕ. Çапла, сăмахран, Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз тата республикăри ытти нумай колхозсем çĕртме тăвас, çĕртме пуссисене лайăх пăхса тăрас тата 1943 çулта кĕрхи тырăсем акса хăварас тĕлĕшпе агротехника ыйтăвĕсене пурне те кăтартнă сроксенче пурнăçа кĕртсе пырса, 1944 çулта тухăçлă тырпул туса илчĕç.

Çав вăхăтрах, çĕртме туса ăна çемçетсе тăмалли агротехника правилисене пăснă тата 1943 çулта кĕрхи тырăсене кая юлса акнă чылай колхозсем начар тырпул туса илчĕç, çав колхозсенче кĕрхи тырăсем кăçалхи çуркунне чылай пăсăлса пĕтрĕç.

Кăтартнă çитменлĕхсене пĕтерес, кĕрхи тырăсене агротехникăн чи лайăх срокĕсенче акса хăварас тата вăйлă тырпул туса илес шутпа, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çапла йышăннă:

1. 1944 çулта кĕрхи тырăсене августăн 10-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче акса хăвармалла тăвас, кĕрхи тулла вара акан малтанхи пилĕк кунĕнче, иртерех те лайăх ĕçлесе тата удобрени тăкса çемçетнĕ çĕр лаптăкĕсем çине акмалла.

2. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, райсовет исполкомĕсене, ВКП(б) райкомĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсене тата колхоз председателĕсене çапла тума хушас:

а) çĕртме пуссине, ку шутра ир пулакан культурăсем (клевер, викăпа сĕлĕ) акнă çĕртме пуссисене те, халех сухаласа пĕтермелле, çавăнпа та клевера, викăпа сĕлле çийĕнчех пухса кĕртес пулать;

б) пăрça-ясмăк акнă е çĕрулми лартнă çĕртме пуссисене, çав культурăсене пухса илнĕ хыççăн, анчах августăн 5-мĕшĕнчен кая юлмасăр сухаламалла. Çав культурăсене, вĕсем пĕтĕмĕшпе пулса çитессине кĕтсе тăмасăр, иртерех пухса илмелле, çулнă тырпула е утта çав вырăнсенчен çийĕнчех витнĕ чтемсем çине, лупасайсене турттарса хумалла, çак ĕç çĕртме сухи тăвассине чăрмантармалла ан пултăр;

в) ăшăх сухаланă тата çумкурăк пусса илнĕ мĕнпур участоксене августăн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр 18 сантиметр тарăнăш тепĕр хут сухаламалла та çийĕнчех сӳрелемелле.

Лайăх та тарăн сухаланă участоксене, вĕсем çинче çумкурăксем сахал пулсан тата тăпра пирчĕнсе ларман пулсан, августăн 5-мĕшĕнчен кая юлмасăр культиваци туса кăпкалатмалла та хыçран сӳрелесе хăвармалла;

г) колхоз картишĕсенчи тата колхозниксен килĕсенчи мĕнпур тислĕке, çавăн пекех тата торфпа ытти тĕрлĕ вырăнти удобренисене халех çĕртме пуссине, пуринчен малтан мĕнле те пулин тырă (уйрăмах вика) акса йышăннă участоксем çине турттармалла, тислĕк тăкнă вырăна çийĕнчех сухаламалла.

3. Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсене, колхоз правленийĕсене вăрлăхлăх акнă кĕрхи тырăсене вăхăтра пухса кĕртсе çапассине, вăрлăхсене сортласа тасатса имçампа чӳхессине организацилеме хушас.

Акмалли вăрлăхăн кашни ушкăнĕнчен уйрăмшарăн илсе, вăрлăха обязательнăй йĕркепе лабораторисенче тĕрĕслесе тухассине организацилемелле, кондицие ларман е тĕрĕслемен вăрлăхсем акма чарас.

Тин çапнă вăрлăх лайăхрах шăттăр тесе, колхозсене вăрлăха хĕвел çинче типĕтме, çавăн пекех тата кăмака таврашĕнче типĕтме сĕнес, анчах çак ĕçе опытлă колхозниксене кăна шанса памалла.

4. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, Чăвашсен селекци станцийĕн директорне, райземхозсене, райсовет исполкомĕсене вăрлăхлăх акнă сортлă кĕртыррисене вăхăтра вырса çапма тата ăна госсортфонд пункчĕсене августăн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр леçсе пама хушас.

Госсортфонда, райисполкомсене тата колхоз председателĕсене колхозсенчи вăрлăх участокĕсене акса хăвармашкăн сортлă кĕртыррисен вăрлăхĕсене улăштарса илмелли плана вăхăтра тата пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртме хушас.

5. Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсене, райçĕрĕç пайĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсене тата колхоз правленийĕсене çапла тума хушас:

а) вăрлăхлăх кĕртырри акмалли çĕр участокĕсене тĕрĕс уйăрса хăварнине контроллесе тăмалла, çав участоксене 1944 çулта кĕрхи тырăсем акмалли хирте лайăх сухаласа тата удобрени тăкса çемçетнĕ вырăнсенче августăн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр уйăрса хăвармалла, вĕсене шалчасем лартса паллă тумалла, акасса вара кĕракин малтанхи кунĕсенчех акмалла;

б) колхозсемпе МТС-сенчи сеялкăсене, культиваторсемпе плугсене тата сӳресене тĕрĕслесе тухмалла та вĕсене августăн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр юсаса çитермелле;

в) кĕрхи тырăсене сеялкăсемпе акса хăвармалла, колхозсемпе МТС-сенче сеялкăсене тивĕçлĕ норма акмалла туса тата вăрлăха тивĕçлĕ таран тăпрапа витмелле туса йĕркелемелле. Кĕракинче сеялкăсемпе мĕнле те пулин туллинрех усă курас тесе, акакансемпе лашасене ятарласа суйласа уйăрмалла;

г) колхозсенче куллен акнă çĕр лаптăкĕсене колхозниксенчен бригадирсем йышăнса тăрассине, бригадирсенчен вара — колхоз председателĕ пахалăх инспекторĕпе пĕрле йышăнса тăрассине организацилемелле. Кĕраки мĕнле пынине тата ака пахалăхне куллен çирĕп контроллесе тăмалла;

д) кĕракипе уборка ĕçĕсене пурне те пĕр вăхăтра туса пыма туртăм вăйĕ çитмен колхозсенче çав тапхăрта уйхир ĕçĕсенче усă курма колхозсемпе колхозниксен ĕнисене, вăкăрĕсене ĕçе явăçтармалла.

## Г. Ф. Захаровпа И. И. Масленникова çар званийĕ— арми генералĕн ятне парасси çинчен

### ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать:
Георгий Федорович Захарова
Иван Иванович Масленникова
СССР Верховный Совет Президиумĕн 1940 çулхи майăн 7-мĕшĕнче йышăннă Указĕ тăрăх тунă çар званине — арми генералĕн ятне парас.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН.
СССР Совнаркомĕн Ĕçĕсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи июлĕн 28-мĕшĕ.

## СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ патĕнче Польша Нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитет руководителĕсен ячĕпе пулса иртнĕ апатлану

Июлĕн 27-мĕшĕнче, СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ патĕнче, Кремльте, Польша Нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитет руководителĕсен ячĕпе апатлану пулса иртнĕ.

Апатланура çаксем пулнă: Польша Нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитетăн председателĕ Э. Б. Осубка — Моравский, Председателĕн заместителĕ А. Витос, Комитет отделĕсен руководителĕсем — генерал-полковник М. Роля-Жимерский, Б. Дробнер, С. Скшешевский, Я. М. Грубецкий, çавăн пекех тата Польша патриочĕсен ССР Союзĕнчи Союзĕн Правлени членĕсем — академик Я. О. Парнас, проф. Л. Б. Хвистек, М. Попель, Польша çарĕн Верховный Командованийĕн членĕ полковник М. Спыхальский тата ыттисем те.

Совет Союзĕ енчен çаксем пулнă: В. М. Молотов, Маршал К. Е. Ворошилов, А. И. Микоян, Л. М. Каганович, А. А. Жданов, Г. М. Маленков, Л. П. Берия, А. С. Щербаков, Н. А. Вознесенский, Флот адмиралĕ Н. Г. Кузнецов, Маршал Г. К. Жуков, Маршал А. М. Василевский, А. Я. Вышинский, В. Г. Деканозов, Авиацин Главнăй Маршалĕ А. А. Новиков, Артиллерин Главнăй Маршалĕ Н. Н. Воронов, бронетанковăй çарсен Маршалĕ Я. Н. Федоренко, артиллери Маршалĕ Н. Д. Яковлев, арми генералĕ А. В. Хрулев, генерал-полковник Ф. И. Голиков тата ыттисем те.

Апатлану Совет Союзĕпе Польша туслăхĕн тата юлташлăхĕн кăмăллă обстановкинче пулса иртнĕ.

Совет правительствин руководителĕсемпе Польша Нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитетăн руководителĕсем Совет Союзĕпе Польша туслăхне çирĕплетесси çинчен тата пĕр тăшмана хирĕç — Германи захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳри юлташлăха çирĕплетесси çинчен сăмахсем каланă.

## ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

## Чăваш АССР шкулĕн тава тивĕçлĕ учителĕ ятне парасси çинчен

(Юлашки. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммунин» 148-мĕш номерĕнче).

34. Алексей Нилович **Нилова** — Тăвай районĕнчи Салагаево пуçламĕш шкулĕн заведующине.
35. Иван Осипович **Осипова** — Шупашкар районĕнчи Туликасси вăтам шкулĕн директорне.
36. Елизавета Николаевна **Павленкăна** — Пăрачкаври педагогика училищин преподавательницине.
37. Адриан Семенович **Павлова** — Калинино районĕнчи Сăкăтри çичĕ çул вĕренмелли шкулăн учительне.
38. Андрей Аристархович **Петрова** — Çĕмĕрле районĕнчи Хутар вăтам шкулĕн директорне.
39. Василий Михайлович **Пономарева** — Етĕрне районĕнчи Ядрино вăтам шкулĕн учительне.
40. Валентина Димитриевна **Распоповăна** — Улатăрти 7-мĕш номерлĕ вăтам шкулăн вĕренӳ пайĕн заведующине.
41. Порфирий Семенович **Ронгинские** — Канашри 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулăн учительне.
42. Иван Сергеевич **Сергеева** — Елчĕк вăтам шкулĕн вĕренӳ пайĕн заведующине.
43. Надежда Владимировна **Степановăна** — Шупашкар хулинчи Сосновкăри çичĕ çул вĕренмелли шкулăн учительницине.
44. Пелагея Павловна **Степановăна** — Элĕк районĕнчи Мăн Тукташри çичĕ çул вĕренмелли шкулăн директорне.
45. Порфирий Митрофанович **Сомина** — Елчĕк районĕнчи Шаймурзино пуçламĕш шкулĕн заведующине.
46. Игнатий Григорьевич **Тельцова** — Канашри педагогика училищин преподавательне.
47. Клавдия Ивановна **Тетеринăна** — Ишлей районĕнчи Ярапайкассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулăн директорне.
48. Алексей Егорович **Топтыгина** — Шăмăршă райçутĕç пайĕн инспекторне.
49. Марфа Дмитриевна **Трубинана** — Куславкка районĕнчи Куснарти çичĕ çул вĕренмелли шкулăн учительницине.
50. Алексей Иванович **Шестакова** — Первомайски районри Аслă Пашъелти çичĕ çул вĕренмелли шкулăн учительне.
51. Анна Павловна **Шибаевăна** — Улатăр районĕнчи Явлей вăтам шкулĕн учительницине.
52. Александр Иванович **Ярлыкина** — Вăрмар районĕнчи Эçпепери çичĕ çул вĕренмелли шкулăн директорне.
53. Илья Николаевич **Яштайкина** — Хĕрлĕ Чутай вăтам шкулĕн учительне.

**Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ**
**З. АНДРЕЕВА.**

**Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ**
**А. ИЗМАЙЛОВ.**

Шупашкар хули, 1944 çулхи июлĕн 25-мĕшĕ.

### *Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ умĕн*

**СОВЕТСКОЕ.**

Мăн Чурашри вăтам шкул коллективĕ иртнĕ çулта вĕренӳ çулне начар мар хатĕрленчĕ. Кăçал та çитес вĕренӳ çулне тимлĕн хатĕрленет.

Хĕл каçма шкула 250 кубометр вутă кирлĕ. Ку пирĕншĕн пысăк ĕç. Çаванпа та эпир çак ĕçе çийĕнчех тытăнтăмăр. Ку тарăхчен учительсен вăйĕпе 150 кубометр хатĕрлерĕмĕр. Çавăнпа пĕрлех классене йĕркене кĕртрĕмĕр. 10 парта юсанă, халĕ партăсемпе сĕтел-пукансем çителĕклех пур. Вĕренекенсем валли 980 кĕнеке, 600 тетрадь тата çырмалли пурă хатĕрленĕ.

Кĕркуннене испытание хăварнисем пирĕн 14 ача. Вĕсем испытани тытма хатĕрленеççĕ. Хăшпĕр ыйтусене учительсенчен ыйтса пĕлеççĕ.

**А. БЕЛОВ,**
**Шкул директорĕ.**

### *Шăмăршăсен чĕнĕвне сӳтсе-яваççĕ*

КӲКЕÇ, июлĕн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). Шăмăршă районĕнчи комсомолецсем вулав çурчĕсемпе колхоз клубĕсене ялти культурăллă-массăллă ĕçĕн вучахĕ туса хурас тĕлĕшпе хаçат урлă чĕнсе каларĕç. Çак чĕнĕве колхозсенчи комсомолецсемпе çамрăксен пухăвĕсенче сӳтсе-яваççĕ.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри (комсомол организацин секретарĕ В. Васильева юлташ) комсомолецсемпе çамрăксем çак чĕнĕве сӳтсе-явнă хыççăн, кашни комсомолеца уйрăм ĕç хушнă. Сăмахран, И. Ананьевпа В. Иванов юлташсем хаçат витринисем, «Юлашки хыпарсен» хăми, кăтарту хăми тăваççĕ, вулав çуртне çулпуççен портречĕсемпе, лозунгсемпе, плакатсемпе, чечексемпе илемлетеççĕ. В. Васильевăпа Л. Иванова юлташсем кĕнекесемпе хаçат-журналсем ушкăнпа вуласине йĕркелеççĕ, Н. Васильевпа З. Молярова юлташсем кружоксен ĕçĕшĕн ответлă.

Колхозниксене Совет Информаци Бюровĕн сводкисемпе тĕнчери лару-тăру çинчен пĕлтерсе тăма ялсоветра ятарласа дежурство йĕркеленĕ. Вулав çуртĕнче справкăсем паракан сĕтел тунă.

**М. НИКИТИН.**

## Хĕрлĕ Çар валли çапăçу техники тума

Шупашкар районĕнчи «Красный флот» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар валли çапăçу техники тума 15.000 тенкĕ пухса хыврĕç. Укçа пухас ĕçре колхоз активĕ пример кăтартать. Пахча-çимĕç бригадин бригадирĕ П. Глухов, тимĕрçĕ М. Глухов 500-шер тенкĕ, фронтовик арăмĕ Е. Рассказчикова 300 тенкĕ, колхоз председателĕ 1000 тенкĕ панă.

**М. ВАСИЛЬЕВ.**

**Укерчĕк çинче:** Муркаш районĕнчи «Красное Сормово» колхоз председателĕ **П. Н. Майков** тата çав колхозри фермăсен заведующийĕ **С. М. Соловьев** юлташсем. Вĕсем иккĕшĕ Совет Союз Геройĕ Ф. Н. Орлов юлташ валли боевой самолет илме 50.000-шер тенкĕ укçа хывнă.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

**Укерчĕк çинче:** «Красное Сормово» колхозăн счетоводĕ **В. Н. Волков** тата çав колхозри 1-мĕш бригадăн бригадирĕ **Е. В. Смелов** юлташсем. Вĕсем иккĕшĕ Совет Союзĕн Геройĕ Б. М. Васильев валли боевой самолет илме 50.000-шер тенкĕ укçа хывнă.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

## ЧУГУН ÇУЛ РАБОТНИКĔСЕН КУНĔ

Паян совет халăхĕ чугун çул работникĕсен кунне паллă тăвать. Çак кун чугун çул работникĕсен миллионлă çарĕ хăйĕн ĕçĕсене тишкерсе тухса, малашне лайăхрах ĕçлемелли, çĕршывпа фронт ыйтăвĕсене ăнăçлăн тивĕçтерсе пымалли майсене палăртса хурать.

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче чугун çул работникĕсем умĕнче тăракан задачăсем пысăкланчĕç. Чугун çул работникĕсен вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе, фронтпа халăх хуçалăхне кирлĕ грузсене вăхăтра турттарса тăрассине организацилемелле пулчĕ. Вĕсем çав хисеплĕ те ответлă задачăна ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Вĕсем фронтпа çĕршыв ыйтăвĕсене тивĕçтерессишĕн вăй-хăвата шеллемесĕр ĕçлеççĕ, хамăрăн Тăван çĕршыва нимĕç захватчикĕсенчен тасатакан Хĕрлĕ Çар хыççăн пырса, чугун çулсене юсаса ĕçе кĕртеççĕ.

Пирĕн республикăри чугун çул работникĕсем те вăрçă вăхăтĕнче хăйсен ĕçне чылаях лайăхлатрĕç. Канашри депо коллективĕ Хусан чугун çулĕ çинче пĕрремĕш вырăна тухнă, куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялав илнĕ. Унта паровозсем çӳретмелли талăкри плана ăнăçлăн тултараççĕ, паровозсене тирпейлĕ тытса усраççĕ. Депори машинистсем хушшинче уйрăмах орденоносец Николаев, Доронин тата ытти юлташсем палăраççĕ. Николаев юлташ Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн фондне 4 тонна горючи перекетлесе панă.

Чугун çул работникĕсене колхозниксемпе колхозницăсем кулленхи ĕçре пулăшса тăраççĕ. Вăрмар районĕн территорине кĕрекен чугун çул çинче яланах вуншар колхознике курма пулать. Вĕсем çулсене юсама, хĕллехи вăхăтра юр хырма пулăшаççĕ. «Дружба» колхоз членĕсем хĕллехипе çуркуннехи вăхăтра чугун çул çинче 2.200 ĕçкунĕ тунă.

Анчах та чугун çул транспорчĕн ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур-ха. Чылай станцисен коллективĕсем таварсем тиемелли плана ăнăçлăн тултараймаççĕ. Вагонсем ахаль тăни пулкалать. Поездсене çӳретмелли расписанисене пур çĕрте те мар çирĕппĕн пурнăçа кĕртеççĕ. Çаксем чугун çул ĕçне чăрмав кӳреççĕ.

Чугун çул ĕçĕнчи çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерме пирĕн пур условисем те çителĕклĕ. Районсенчи тата транспортри парторганизацисен партиллĕ-политикăллă ĕçе вăйлатса пымалла, социализмлă ăмăртăва анлăн сармалла, чугун çул работникĕсем хушшинче çар дисциплинине çирĕплетмелле. Çулйĕр Халăх Комиссарĕн приказĕсене пурнăçа кĕртсе пымалла. Çакă вара пирĕн транспорта лайăх ĕçлеме тата государство планне пур тĕлĕшпе те ăнăçлă тултарса пыма май парать.

Чугун çул работникĕсен халĕ уйрăмăнах хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлемелле. Хĕллехи тапхăрта чугун çул работникĕсем умне чылай йывăрлăхсем тухса тăраççĕ. Çавăнпа хĕле тĕплĕн хатĕрленмелле кирлĕ. Паровозсен паркне, çул хуçалăхне, ĕç хатĕрĕсене юсаса хатĕрлемелле. Çавăнпа пĕрлех производство çурчĕсемпе пурăнмалли çуртсене, культура учрежденийĕсене хĕле тĕплĕн хатĕрлемелле.

Чугун çул работникĕсем хăйсене Хĕрлĕ Çарăн тăван шăллĕ тесе шутлаççĕ. Ку тĕрĕс. Чугун çул работникĕсем Хĕрлĕ Çартан хастарлă ĕçлеме, дисциплинăллă пулма вĕренеççĕ. Хĕрлĕ Çар воинĕсен паттăр примерĕ чугун çул работникĕсене вăй-хăвата шеллемесĕр ĕçлеме хавхалантарать.

### Малта пыракан цехсем уйăхри плана иртгерсе тултарнă

УЛАТĂР, июлĕн 29-мĕшĕ. (Телефонпа). Паровозсем юсакан заводри нумай цехсен коллективĕсем чугун çул работникĕсен кунне июль уйăхĕнчи плана ирттерсе тултарнипе кĕтсе илчĕç. Çапла, механически цех, рессорсем тăвакан отделени уйăхри плана 28 кун хушшинче тултарнă. Механически цехра Легостина тата Егоров юлташсем ертсе пыракан комсомолецсемпе çамрăксен бригадисем малта пыраççĕ. Вĕсем кулленхи нормăна яланах 200 процент тултараççĕ.

### *Хăйсен сăмахне пурнăçларĕç*

КАНАШ, июлĕн 29-мĕшĕ. (Телефонпа). Вагонсем юсакан заводри урапасем тăвакан цех коллективĕ июнь уйăхĕнче Çулйĕр Халăх Комиссарĕнчен Каганович юлташран пĕр ответлă задани илнĕ. Цех коллективĕ, çав задание вăхăтра тата лайăх пурнăçа кĕртес тесе, Бакури вагонсем юсакан заводри урапасем тăвакан цех коллективĕпе ăмăртăва тухрĕ. Кашни станок патĕнче хĕрӳллĕ ĕç пуçланчĕ. Стахановецсем Саенко, Г. Хрипунова, Варламов, Олейник тата ытти юлташсем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕç. Вĕсем хăйсен примерĕпе пĕтĕм коллектива хастарлăн ĕçлеме хавхалантарчĕç.

Цех коллективĕ хăйĕн сăмахне чыслăн пурнăçа кĕртрĕ. Вăл Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн завочĕсенчи урапасем тăвакан цехсен ăмăртăвĕнче малти вырăна тухрĕ.

### *РЕСПУБЛИКА УЙХИРĔСЕНЧЕ*

## Комбайнерсен ăмăртăвĕ

### Комбайнер К. З. Валеев ăмăртăва хутшăнать

ЧКАЛОВСКОЕ, июлĕн 29-мĕшĕ. (Телефонпа). Паян эпир комбайнер К. З. Валеев юлташ ĕçлекен колхозра пултăмăр. Ана чылай МТС-сенчи комбайнерсем ăмăртăва тухса хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илни çинчен каласа парсан, вăл çапла ответлерĕ:

— Хĕрлĕ Çар фронтра чаплă çĕнтерӳсем тăвать. Эпир кунта тырпулсене лайăх пухса кĕртессишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе, Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсемпе офицерĕсене ытларах тырпул парассишĕн кĕрешмелле. Кăçал эпĕ хамăн комбайнпа 450 гектар вырса пухма пулатăп. Социализмлă ăмăртăва Шăмăршă МТС-ĕнчи комбайнера В. Т. Фадеев юлташа чĕнетĕп, — терĕ Валеев юлташ.

**С. НИКИТИН,**
**ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.**

### Комбайнер И. И. Михайлов 400 гектар вырса пухма пулать

Июлĕн 28-мĕшĕнче пирĕн редакци сотрудникĕ Çĕмĕрле МТС комбайнерĕпе И. И. Михайлов юлташпа телефонпа çыхăнса каларĕ. Ана Етĕрне МТС-ĕнчи комбайнер В. И. Токсубаев ăмăртăва чĕнни çинчен пĕлтерчĕ.

Михайлов юлташ çапла ответлерĕ:

Иртнĕ çул тыра вырнă вăхăтра çанталăк йĕпе-сапаллă тăнă пулсан та, эпĕ пĕр комбайнпа 301 гектар тырпул вырса пухрăм, плана 274 процент тултартăм.

Кăçал тырпул пухса кĕме эпĕ лайăхрах хатĕрлентĕм тата ĕçри опыт та пысăкрах. Республикăри паллă комбайнер П. Маркиянов юлташ (Йĕпреç МТС-ĕ статьине вуланă хыççăн ăмăртăва тухма шутларăм. Етĕрне МТС-ĕнчи комбайнер В. И. Токсубаев чĕннине йышăнса, кăçал пĕр комбайнпа 400 гектар вырса пухма тата горючи 10 процент перекетлеме пулатăп. Паллах, ĕç пахалăхĕ лайăх пулмалла. Паянтыран комбайнпа ыраш вырма тытăнатпăр, хам çине илнĕ обязательствăна ăнăçлăн пурнăçласса шанса ĕçе пуçăнатăп.

## *Хĕрсе тыра выраççĕ*

ЧУРАЧĂК, июлĕн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри пур колхозсенче те ыраш вырас ĕç хĕрӳллĕн пырать. Нумай колхозсем кĕçех ыраш вырса пĕтереççĕ. Сăмахран, «Красный флот» тата «Красная Павария» колхозсем ыраша 75—85 процент вырса пуçтарнă. «Красный флот» колхозра иккĕмĕш кун ĕнтĕ авăн çапаççĕ. Ĕнер колхоз 24 центнер чи лайăх тырра государствăна леçрĕ.

«Красная Павария» колхозра та ыраша вырнă хыççăнах типĕтеççĕ те çапаççĕ. Ку колхозра ыраша çурлапа выраассине лайăх организациленĕ. Ыраш вырнă çĕрте ĕçлекенсем пурте уйрăм сдельщинăпа ĕçлеççĕ, çавна май ăмăрту анлăн саралса пырать. Колхозница Е. Трофимова кашни кунах çурлапа 0,10 гектар вырас вырăнне 0,28 гектар вырать. 65 çулхи колхозница Домна Егорова юлташ çурлапа вырмалли нормăна 240 процент тултарать, Н. Максимова колхозница та унтан юлмасть, вăл та кашни кунах 0,24 гектар вырать.

«Красный флот» колхозра ыраш вырма хĕвел тухиччен тытăнаççĕ те хĕвел ансан тин уйран кĕреççĕ. П. Николаева, О. Филимонова тата Маркова колхозницăсем кашни кунах çурлапа 0,24,—0.28 гектар выраççĕ. «Красный флот» колхоз июлĕн 30-мĕшĕ тĕлне ыраш вырса пĕтерет.

Паянхи кун тĕлне пĕтĕм районĕпе 1236 гектар ыраш вырнă тата сĕмеле хывнă.

**Ф. АРТЕМЬЕВ,**
**ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.**

* * *

ТАВАЙ. Малта пыракан колхозсем тыра вырма лайăх хатĕрленсе тухрĕç. Тĕплĕн шухăшласа тунă ĕç планĕсене колхозниксен пухăвĕсенче çирĕплетнĕ. Çĕнĕ Тăрмăшри «Мартăн 8-мĕшĕ» колхозра 2 жнейка юсаса хатĕрленĕ, çурласене шăлланă, 15 кĕреплеллĕ çава хатĕрлесе хунă. 2 витнĕ итем тӳрлетнĕ, итем варрисем таса. Ĕç планĕ тăрăх ыраша 7 кунта, çуртырине 11 кунта пухса кĕртме палăртнă. Çапнă тырра государствăна леçме 11 çынран транспорт бригади тунă. Вĕсене валли ĕçлеме лаша, кирлĕ инвентарьсемпе михĕсем çителĕклĕ уйăрса хунă. Емельян Щукин, Гордей Русин стариксем капан тăвакансем пулаççĕ. Парторганизаци (секретарĕ Фомин юлташ) коммунистсене ответлă участоксене тăратса тухнă, агитколлектив тыра вырнă вăхăтра тумалли политикăллă ĕçĕн планне сӳтсе-явса çирĕплетнĕ.

— Ачасем валли ясли пулать, — тет колхоз председателĕ коммунист Евдокимов, тинĕс пек хумханса ларакан ыраш уйĕ çинчен куçне илмесĕр.

«Мартăн 8-мĕшĕ» колхозпа ăмăртса ĕçлекен Мичурин ячĕпе тăракан колхозра та хĕрӳ ĕç пырать. 3 жнейка, 2 косилка, 13 çава тыра вырма хатĕр. Жнейкăпа ыракансем Павел Васильев, Петр Петров хăйсене çирĕплетсе панă жнейкăсене кӳлсе уя тухса пăхрĕç. Кунта та пĕрлешӳллĕ столовăй тума продуктсем хатĕрлесе çитерне, вырма тухсан пĕрремĕш кунах ясли ĕçне пуçарса яма хатĕрленнĕ. Комсомолецсемпе çамрăксен бригадине организациленĕ, ăна комсомол организаци секретарĕ Валентина Лаптикова ертсе пырать.

— Паян сӳйласа вырма пуçларăмăр. 4 бригади те уйра, — тет Тенеялĕнчи «Çĕнĕ çул» колхоз председателĕ. Ку колхоз тыра вырма чылай малтан хатĕрленсе çитнĕ. Ватă колхозниксем Егор Яковлев, А. Николаев, Е. Павлова, Е. Пимулин кашни кунах уя тухса тыра пулассине тĕрĕслесе тăчĕç. Пулса çитнĕ участоксене вырмах пыраççĕ. Паян 4 жнейкăпа вырма тытăнчĕç. Çавăн пекех Йăнтăрчăри «Çулăм» колхозра та вырма тытăнчĕç. Анчах кунта тухса çитермен ĕçсем те чылай-ха. Транспорт бригади çук, ачасем валли ясли тăвасси çинчен шухăшламаççĕ.

Уйрăм колхозсем хатĕрленӳ ĕçĕсене халĕ те пĕтермен. Кивĕ Пуянкассинчи «Социализм» колхоз (председателĕ Максимов) тырпул пухса кĕмелли ĕç планне туман, жнейкăсене юсаман. Чутейри «Хурçă» колхоз, ытти çулсенче пур ĕçре те малта пынăскер, хатĕрленӳ ĕçĕсене тăсса пырать. Ялхуçалăх машинисене юсаса пĕтермен, урапасем çителĕклĕ мар.

## Коммунистсен районри пухăвĕ

ЕЛЧĔК, июлĕн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). Çак кунсенче кунта коммунистсен районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху пĕр ыйту — СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление сӳтсе-яврĕ.

Çак ыйтупа ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Волков юлташ доклад турĕ.

Районĕпе кăçал 12.546 гектар тыра вырса пуçтармалла. Июлĕн 28-мĕшĕ тĕлне 3.860 гектар (20 процент) вырнă. «Осоавиахим» колхоз, ыраш вырса пĕтерсе, пăрçа çулма тытăннă та ĕнтĕ.

Ворошилов ячĕпе тăракан Хĕрлĕ Ялавлă колхоз председателĕ Зайцев юлташ пухура сăмах тухса каларĕ.

— Пирĕн колхоз июлĕн 26-мĕшĕ тĕлне 140 гектар ыраш вырчĕ, — тет вăл. — Эпир тырăсем пиçсе çитнĕçемĕн жнейкăсене ĕçе ятамăр. Пирĕн 8 жнейка ĕçлет. Колхозри ĕç вăйĕпе туллин усă курас тесе 150 ача вырнаçмалăх ясли уçрăмăр. Пирĕн колхозниксем каçхине уйхиртен киле таврăнмаççĕ, унтах çывăраççĕ. Ырми-канми ĕçлесе, хăйсен нормисене 150—200-шер процент тултараççĕ. Ĕçлессе вĕсем уйрăм участоксем çинче, сдельщинăпа ĕçлеççĕ. Бригадирсем, çав участоксенче пулса, вĕсен ĕçĕсене йышăнаççĕ, ĕç пахалăхне тĕрĕслеççĕ. Тĕрĕсленĕ тăрăх, колхозниксем тырра пĕр тăккаламасăр вырни палăрать. Пирĕн колхоз государствăна кăçалхи çулшăн иртнĕ çултах тыра парса татнă. Апла пулин те, эпир, çак кунсенчех авăн çапма пуçласа, государствăна 1945 çулшăн тыра пама тытăнатпăр.

«Красное знамя» колхоз председателĕ Варламов юлташ та хăйсен колхозĕнче тыра вырас ĕç хăвăрт пулса пыни çинчен каларĕ. Вĕсем тепĕр ик-виçĕ кунран вырса пĕтереççĕ.

Çаксемпе пĕрлех пуху хăшпĕр колхозсенче тыра вырас, авăн çапас, государствăна тыра парас ĕçсем вăрахăн пынине палăртрĕ. Акă, «Социализм», «Мало-Байдеряково» колхозсем, тыра пиçсе çитнĕ пулин те, вырма тухман-ха. «Ново-Чурино», «Комбайн» колхозсем жнейкăсемпе вырма тытăнман. Кун пек колхозсем татах та пур. Районри 250 жнейкăран 90-шĕ çеç ĕçлеççĕ.

Çавăн пекех вăкăрсене ĕçе вĕрентесси те начар пырать. 630 вăкăра ĕçе вĕрентес вырăнне 359-шне çеç вĕрентнĕ.

Пухура ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл хăшпĕр колхозсем тырпул пухса кĕртме васкаманни тата тăккаласа вырни çинчен чарăнса тăчĕ. ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ, çавăн пекех паргин пуçламĕш организацийĕсем тырпулсене пухса кĕртес ĕçри çитменлĕхсене асăрхаса тăманнине критиклерĕ.

Пуху палăртнă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

**А. ЧЕРНОВ.**

## *МУСКАВ САЛЮЧĔ*

**Каçсерен эс ĕçрен таврăнсассăн,**
**Сана савнăç кĕтет, хуйăх мар.**
**Хумхануллă та кăмăллă сасă**
**Пĕлтерет çĕнĕ чаплă хыпар.**

**Сывлама та пăрахнăн пĕр каса**
**Çут тĕнче Мускава çеç итлет.**
**Ку хыпар — аслă маршал приказĕ,**
**Ку вăл — халăх хăвачĕ кĕрлет.**

**Шухăшпа Мускавра кăшт пулар-и,**
**Илемне куç хывар-и самант?**
**Ялкăшать çĕнтерӳ вут-кăварĕ,**
**Çуталать юмахри асамат.**

**Çăлтăр çăмăрĕ, чĕнтĕрлĕ çиçĕм**
**Тӳпе тăрăх çиçеççĕ пĕрле.**
**Ку вăл — халăхăн вилĕмсĕр ĕçĕ,**
**Ку вăл — чăнлăх салючĕ кĕрлет.**

**Хĕрлĕ Çарăн — герой-çĕнтерӳçĕн**
**Таса ĕмĕчĕ — ирĕк кăна.**
**Çавăнпа та Мускав шурăмпуçĕ**
**Халĕ пур тĕнчене курăнать.**

**Хавхаланчĕ, çĕкленчĕ этемлĕх**
**Пирĕнпе çула тухрĕ пĕрле.**
**Ку вăл — çĕр чăмăрне илтĕнмелĕх**
**Аслă туслăх салючĕ кĕрлет.**

**Салют çиçĕмĕсем çиçнĕçемĕн**
**Çуттăнрах йăлтăраççĕ куçсем.**
**Тырпулсем туллинрех çитĕнеççĕ,**
**Çепĕçрех саралаç чечексем.**

**Ашшăнрах пăхать савнăç хĕвелĕ,**
**Пĕтĕм çĕр çĕнĕрен чĕрĕлет.**
**Кашни çын чĕрине çĕклемелĕх,**
**Ку вăл — пурнăç салючĕ кĕрлет.**

**Аркадий ЕÇХЕЛ.**

### *РЕСПУБЛИКА ТĂРĂХ*

#### МАСТЕРСЕН КУРСĔ

Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра мастерсен 8 уйăхлăх курсĕ уçăлать. Унта ĕç хыççăн вĕрентеççĕ. Курса бригадирсемпе стахановецсене илеççĕ. Сăмахран, комсомолецсемпе çамрăксен фронтовой бригадинчен Туслова, Матвеева, Белкова юлташсем, Гольдман юлташ начальник пулса ĕçлекен цехран паллă прессовщиксем Голубчиков, Федоров, мастер помощникĕ — стахановка Серебрякова юлташсем пулаççĕ.

Курс август уйăхĕнче ĕçлеме тытăнать.

#### КОЛХОЗСЕМ ВАЛЛИ АПТЕЧКĂСЕМПЕ ТАВАРСЕМ

ИШЛЕЙ. Уборка вăхăтĕнче колхозниксене уйра ĕçленĕ çĕрте медицина пулăшăвĕ памалла тăвас тесе, районри аптека «Колхоз аптечкисем» хатĕрленĕ. Халĕ çав аптечкăсене чылай колхозсем туяннă. Медицина пулăшăвне колхозсенче сапуполномоченнăйсем, санпостсен членĕсем параççĕ.

Çавăн пекех райпотребсоюз та уборка валли çавасемпе лапаткасем, çурласем, урапа кусатранĕсем, сĕрмелли япаласем илсе килнĕ.

#### ЗАЕМ ВЫЛЯВĔСЕМ ТĂРĂХ УКÇА ТӲЛЕÇÇĔ

ЕЛЧĔК. Районри перекет касси кăçалхи 6 уйăх хушшинче ĕççыннисене государство заемĕсен вылявĕсем тăрăх 101.000 тенкĕ, укçа-тенкĕпе япаласен 3-мĕш лотерейи тăрăх 83.000 тенкĕ тӳленĕ. Вăл шутран пĕр облигаципе 5.000 тенкĕ, 7 облигаципе 1000-шер тенкĕ тӳленĕ.

#### ЯЛТИ ДРАМКРУЖОК

КӲКЕÇ. Комсомолăн «Коминтерн» колхозри организацийĕ драмкружок организациленĕ. Унта 15 çын тăрать. Вĕсем çураки вăхăтĕнче 2 спектакль лартнă. Çĕнĕ çултанпа пурĕ 6 спектакль лартнă. Драмкружок кӳршĕри ялсене те тухса çӳрет. Унта «Çĕрлехи çиçĕм», «Утарта», «Штабра» тата «Вăрçă кунĕсенче» пьесăсене выляса панă.

#### ЧĂВАШ ЧĔЛХИН СЛОВАРĔ

Çак кунсенче вырăспа чăваш чĕлхин словарьне тăвас ыйтупа канашлу пулса иртрĕ. Словаре мĕнле тăвасси çинчен филологи наукисен кандидачĕ Горский юлташ доклад туса пачĕ. Доклада сӳтсе явнă çĕре чăваш чĕлхине тĕпчесе вĕренес енĕпе ĕçлекен юлташсем хутшăнчĕç.

Словаре Чăваш республикине тунăранпа 25 çул тултарнă тĕле хатĕрлесе çитерме палăртнă.

#### «НЕПОКОРЕННЫЕ» ЧĂВАШЛА ТУХАТЬ

Нимĕç захватчикĕсем хăйсем вăхăтлăха тытса илнĕ совет районĕсенче мĕн тери тискер ĕçсем тунине, совет çыннисем вĕсене пĕр самантлăх та парăнмасăр хаяррăн кĕрешнине кăтартакан художествăллă произведенисем хушшинче вырăс писателĕ Борис Горбатов çырнă «Непокоренные» ятлă повесть уйрăмăнах паллă вырăн йышăнса тăрать.

Чăвашгосиздат халь вăл кĕнекене чăвашла кăларать. Вырăсларан ăна Л. Агагов писатель куçарнă.

## Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 27-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла калать:

«Союзниксен наступлени тăвакан танковăй чаçĕсем хĕвеланăç секторта малалла хăвăрт куçса пыраççĕ. Вĕсен пĕр колонни Сен-Ло хулипе Перси хушшинчи çула Ле Меснилъ Эрман сывăхĕнче татнă. Тепĕр колонни Каннзи хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнелле 4 миля малалла кайнă. 3-мĕш колонни Кутанс хулине каякан çулпала Мариньи хулинчен кăштах хĕвеланăçнелле куçнă. Сев шывĕпе Э шывĕ хушшинче пирĕн çарсем 2.000 ярд малалла куçнă, Перье хулипе Лессэ хушшинчи çула татнă. Июлĕн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Верьер районĕнче тăшманăн вăйлă контратакине сирсе пăрахнă.

Кан секторĕнче тăшман урăх атакăсем туман.

ЛОНДОН, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 28-мĕшĕнче ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла калать:

Фронтăн хĕвеланăç секторĕнче союзниксен çарĕсем Мариньи хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре хăвăрт малалла куçса пынă, вĕсем Кампрон хулипе юнашар ларакан ялсем патне тата Сериз-ла-Саль патне çитсе тухнă. Ытти чаçсем Перье хулинчен кăнтăралла куçнă. Конон хулинчен хĕвеланăçнерехре самаях анлă территори тытса илнĕ. Кан хулинчен кăнтăртарахри позицисене пирĕн çарсем хăйсен аллинче çирĕп тытса тăраççĕ. Тăшман темиçе хутчен те контратакăсем тума хăтланнă. Çав контратакăсене пурне те артиллерипе авиаци сирсе янă.

Союзниксен авиацийĕ июлĕн 27-мĕшĕнче кун каçиччен пĕтĕм фронт талккишĕпех тип çĕр çинчи çарсене çапăçма пулăшса тăнă, çавăн пекех тата тăшман объекчĕсене тапаннă.

ЛОНДОН, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 28-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла калать:

Хĕвеланăç секторĕнче пирĕн çарсем Лессэ хулипе Кутанс хули хушшинчи çул тăрăх кăштах малалла куçнă. Кунтан хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Э шывĕн икĕ хĕррипе те малалла куçса пынă та Корбюшон районне пырса тухнă. Мариньи хулинчен хĕвеланăçнелле куçса пырса, Кутанс хули тулашне пырса çитнĕ. Союзниксен çарĕсем Нотр-Дам-де-Сенильи витĕр тухнă та çул тăрăх кăнтăр-хĕвеланăçнелле куçаççĕ. Пĕр часть, Монпертю витĕр тухса, Персирен çурçĕрелле куçса пырать. Пирĕн çарсем, Тесси-сюр-Вира илнĕ хыççăн, çул тăрăх çак хуларан кăнтăр-хĕвеланăçнелле куçса пыраççĕ, вĕсем Гаврэ хули патне çитесси 11 километр кăна юлнă. Сен-Ло хулипе Комон хули хушшинчи районра союзниксен çарĕсем хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

Союзниксен авиацийĕ тип çĕр çинчи вăйсене тăшманпа çапăçма пулăшнă, тăшман чаçĕсем шоссе çулĕсем çинче пухăнса тăнă вырăнсем çине бомбăсем пăрахнă. Çăмăл тата вăтам бомбардировщиксем Парижран Монтаржи, Дижон, Мулен, Тур тата Руан хулисене каякан чугун çулсене пыра-пыра çапнă.

## Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

### ШТУТГАРТА ТАПАННИ. — 500 САМОЛЕТ ПЛОЕШТИЕ ТАПАННĂ. — АМЕРИКА БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ ВĂТАМ ГЕРМАНИ ÇИНЧЕ

ЛОНДОН, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен «Москито» йышши бомбардировщикĕсем, 1.800-шер килограмм таякан бомбăсем тиесе, Штутгарт хули çине вĕçсе кайса тапаннă.

ЛОНДОН, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çумĕнчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: паян «Вĕçекен крепость» йышши тата «Либерейтор» йышши 500 самолет, Италири аэродромсем çинчен вĕçсе улăхса, Плоештие тапаннă. Юлашки 12 сехет хушшинче ку ĕнтĕ Плоештие иккĕмĕш хут тапанни пулать.

ЛОНДОН, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Европăри сывлăш çар вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: июлĕн 28-мĕшĕнче ирхине американецсен 8-мĕш авиаци корпусĕнче тăракан «Вĕçекен крепость» йышши бомбардировщиксен питех те пысăк соединенийĕсем, темĕн чухлĕ истребительсем хӳтĕлесе пынипе, Вăтам Германири вăрçă объекчĕсене атакăланă. Атакăланă районра пĕлĕтлĕ çанталăк тăнă пирки, бомбăсене приборсем кăтартнă тăрăх пăрахнă.

### ГЕРМАНИРИ ЛАРУ-ТĂРУ ПИРКИ

ЖЕНЕВА, июлĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлерла Трансоциан агентстви çапла пĕлтернĕ: Берлинра июлĕн 20-мĕшĕнче пуçланнă пăлхава хутшăннă генералсен хушамачĕсене пичетлесе кăларнă. Унта инфантери генералне Ольбрихта, Бек генерал-полковника, Гепнер генерал-полковника асăннă.

Çав агентствах официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ хыпара панă: Бек генерал-полковник хăйне хăй вĕлернĕ, Гепнер генерал-полковника тытса хупнă, халĕ вăл суд пуласса кĕтет.

**Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.**


### ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

июлĕн 28-мĕшĕнчен пуçласа кунсеренех американецсен илемлĕ, темиçе сăрпа ӳкернĕ çĕнĕ фильмне

**«ДЖУНГЛИ»**

кăтартать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Билетсене кассăра ирхине 10 сехетрех сутма пуçлаççĕ.

Росглаввинон Шупашкарти эрех комбиначĕ халăхран тата сельпосемпе колхозсенчен тĕрлĕ çырла, панулми (садра е вăрманта çитĕнни) тата пилеш йышăнать. Çавăн пек сад çимĕçĕсем паракансене 40 градуслă эрех, промтоварсем тата премек. конфет йышши тутлă çимĕçсем параççĕ.

Адрессем: 1) г. Чебоксары, ул. Коммунальная слобода, 21.
2) г. Марпосад, Винпром.
3) г. Алатырь, Росглаввино.


РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00287 Типографии №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59Х42 в. л. Тираж 14.400 экз.